**Ноябрĕн 10-мĕшĕ – Милици кунĕ**

# Оперативлăхпа тимлĕх – малашне те

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Ытларах мĕнле преступленисем пулчĕç-ха районта?**

– Ют пурлăха хапсăнса вăрă ĕçĕсем туни ытларах сарăлнă. 10 уйăх хушшинче çакăн пек 167 тĕслĕх пулчĕ. Автотранспорт хатĕрĕсене вăрлани, дача çурчĕсемпе хваттерсенчен, магазин склачĕсенчен пурлăх вăрланă тĕслĕхсем ытларах пулчĕç. Çакăн йышши преступленисене – вĕсем йывăррисен шутне кĕреççĕ – каçхи тата çĕрлехи вăхăтра тунипе йĕркене пăсакансене куракансем те çукпа пĕрех. Çапах та хальлĕхе вĕсенчен 65,8 процентне уçса пама май килчĕ. Ку кăтарту, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ӳсрĕ. Çакă оперативлă следстви ушкăнĕсем хыпар илсенех вырăнсене тухнипе те сыхăннă. Ĕç эффективлăхĕ ӳсни пире малашне ытларах оперативлăхпа тăрăшулăх кăтартма хистет.

**– Граждансен хăш категорине кĕрекенсем хушшинче йĕркене пăсасси анлăрах сарăлнă?**

– Кăçалхи январь-октябрь уйăхĕсенче тунă преступленисене тишкерни вĕсене ытларах ниçта та ĕçлемен çынсем туни уççăн курăнать – пурĕ 167 преступлени. Маларах та йĕркене пăснисем çак çул çине тепре тăнине 100 тĕслĕх кăтартса парать. Ӳсĕрле йĕркене пăсни те сахал мар – 76 преступлени. Ушкăнпа тунă преступленисем ку таранччен 28 пулчĕç.

**– Евгений Иванович, терроризмла тата экстремизмла характерлă преступленисем ан пулччăр тесе, наркотиксемпе тата хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешессипе шалти ĕçсен пайĕ мĕнлерех ĕçлесе пырать?**

– Терроризмла тата экстремизмла характерлă, çавăн пекех наркотиксемпе тата хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешесси, профилактика ĕçĕсене туса пырасси пирĕн пайра пысăк пĕлтерĕшре. Ку енĕпе те тăрăшсах ĕçлетпĕр. Иртнĕ 10 уйăхра наркотиксемпе çыхăннă преступленисен шучĕ çиччĕпе танлашрĕ. Хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешес ĕçре йĕркене пăснине 4 тĕслĕх тупса палăртрăмăр. Терроризмла тата экстремизмла характерлă преступленисем ан пулччăр тесе ют çĕршыв çыннисене, тĕрмерен таврăннисене тĕрĕслесех тăратпăр. Халăх нумай пухăнакан тĕрлĕ мероприятисенче йĕркене сыхлассипе ĕçлетпĕр.

**– Обществăлла вырăнсенче хăрушсăрлăх енĕпе лару-тăру мĕнлерех?**

– Обществăлла вырăнсенче çак тапхăрта 25 преступлени пулнă, вĕсенчен 73,7 процентне уçса панă. Çакă пĕлтĕрхи тапхăртинчен пысăк. Урамсенче вара пурĕ 11 преступлени тунине çирĕплетнĕ, вĕсене пурне те уçса пама май килчĕ. Шалти ĕçсен пайĕн обществăри хăрушсăрлăх милици уйрăмĕ умĕнче профилактика ĕçне вăйлатма тĕллев лартрăмăр. Çак енпе пурĕ 79 вăрă ĕçĕ пулнă. Тĕрлĕрен профилактика мероприятийĕсем, операцисемпе рейдсем пурĕ ку таранччен 324 ирттертĕмĕр. Вĕсенче вара административлă йĕркене пăснăшăн 5862 протокол çырма тиврĕ.

**– Эсир ертсе пыракан пайăн ĕçĕ питĕ анлă, анчах та пирĕншĕн, пакунсăррисемшĕн, пур чухне те куçа курăнмасть. Акă паян пĕр хĕрарăм редакцие кĕрсе шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕнче вăй хуракан А. Чернов следователе тав тăвасшăннине пĕлтерчĕ. Эсир вара уяв умĕн ĕçре хастарлăх кăтартакансене камсене асăнса хăварма пултаратăр?**

– Пирĕн ĕçре хастарлăх тени пулмаллах. Пай сотрудникĕсем яваплăха туйса тăрăшаççĕ. Ятран асăнас пулсан вара эпĕ те следстви уйрăмĕнчен пуçлăттăм: уйрăма ертсе пыракан К.И. Петров юстици подполковникĕ, И. Васюхин, П. Павлов, Л. Рузмикина, А. Чернов, Ю. Ананьев, Л. Плечова, Е. Круглова. Çак коллективра, вăл çамрăк пулин те, следовательсем пĕр-пĕрне ăнланса, йĕркеллĕ, туслă ĕçлесе пыраççĕ. Криминаллă милици уйрăмĕн ертӳçи М.М. Мясников, обществăлла хăрушсăрлăх милици уйрăмĕн ертӳçи В.А. Григорьев ятран асăннине тивĕç. Çул çитменнисемпе ĕçлекен уйрăмăн ертӳçи В.М. Максимов, уголовнăй шырав пайĕн оперуполномоченнăйĕ И.Г. Макаров, аслă эксперт-криминалист С.А. Иванов, оперативлă дежурнăй Н.М. Цветков, учетпа административлă ĕç инспекторĕ А.В. Кириллова, шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çулйĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕ Ю.А. Васильев тăрăшулăхпа палăраççĕ.

**– Ĕçре йывăрлăхсемсĕр пулмасть. Пулăшакансем тупăнаççĕ-и çакнашкал чухне?**

– Малтанах манăн район пуçлăхне Ю.А. Иванова тата районти депутатсен Пухăвне тав тăвас килет. Вĕсем пире ăнланса вăхăтра пулăшса пыни яланах кăмăла çĕклет. Çавăн пекех районти икĕ райпо ертӳçисене Б.В. Андреевпа Л.П. Майкована та пирĕнпе килĕштерсе ĕçлесе пынăшăн тав тăватпăр. Тав сăмахĕ шалти ĕçсен пайĕнче ĕçленĕ ветерансен канашĕн ертӳçине Ю.Г. Соловьева та каламалла. Вăл яланах пирĕн ĕçпе интересленсех тăрать, шăнкăравлать, сĕнӳканаш пама ӳркенмест. Ĕçре пулăшу панăшăн отставкăри генерал-майора М.Ф. Киселева та пысăк тав.

**– Уяв ячĕпе ĕçтешсене, ветерансене мĕн сунатăр?**

– Пурне те – шалти ĕçсен пайĕнче халь вăй хуракансене те, йĕрке хуралĕн ветеранĕсене те, вĕсен çемйисене те – професси уявĕ ячĕпе ăшă кăмăлпа саламлатăп. Ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама сирĕн вăй-хăват çиттĕр, çирĕп сывлăх, ăнăçу пултăр. Çемйĕрсенче те тату пурнăçпа килĕшӳ сунатăп.

Пурне те самантпа усă курса ноябрĕн 10-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче 12 сехетре пуçланакан савăнăçлă мероприятие йыхравлатăп. Шалти ĕçсен пайĕн ĕç-хĕлĕпе паллашма тата хамăрăн сотрудниксен вăйĕпе хатĕрленĕ концерта курма хавас пуласса шанатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

**Милици хроникинчен**

## Пĕр кунта – 4 виле

Пирĕн район территорийĕнчи федераллă М–7 трасса çинче иртнĕ уяв кунĕнче лăпкă пулман. Кăнтăрла 12 сехетре Хусана каякан çурма прицеплă машина хирĕçле çул çине тухса КамАЗа пырса çапать. КамАЗ водительне Шупашкарти больницăна ăсатаççĕ, унпа пĕрле ларса пынă 40 çулти хĕрарăм вара авари пулнă вырăнтах вилсе каять.

Сехет йĕпписем каллех 12-мĕш сехет кăтартнă чухне, хальхинче вара çĕрлехи вăхăтра, пирĕн районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци сотрудникĕсен каллех çак трасса çине усал хыпар илсе Ситуккасси ялĕ патне çитме лекет. Кунта – тепĕр авари. Чулхула еннелле каякан микроавтобус (6 пассажир пулнă) машинăсем хирĕç килекен çул çине тухса каять, фургонлă машинăпа вăйлах çапăнать. Аманнисене Муркашри тĕп тата Шупашкарти васкавлă медицина пулăшăвĕ паракан больницăсене леçеççĕ. Фургонлă машинăн водителĕ тата тепĕр икĕ арçын çакăнтах куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупаççĕ.

Çул çинчи тимлĕх пирки нихăçан та манас марччĕ, мĕншĕн тесен çакнашкал лару-тăрура пирĕнтен кашниех пулма пултарать.

## Патронсем саккунсăр майпа упранă

Хĕç-пăшала, боеприпассене тата сирпĕтекен япаласене саккунсăр майпа упранăшăн айăпне Уголовнăй кодекспа палăртнă. Иртнĕ кунсенче шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем газ тата сунар пăшалĕсене мĕнле упранине тĕрĕслессипе Исетерккĕ ялĕнче пулнă. Пĕр кил хуçин сейфĕнче вара спортпа сунар винтовкин 48 патронĕ те тĕрĕслеве «кĕтнĕ» иккен. Халĕ ку тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**


**Коллектив МОУ «Моргаушская СОШ» приглашает выпускников школы на торжества в честь 125-летнего юбилея школы 14 ноября 2009 года к 10-00 часам.**

**Продаю новую двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Чапаева. Отопление индивидуальное.**
**Тел.: 8-908-301-36-85.**


**Çырăнтару: Тантăш, Тетте, Самант**

**Хакĕсем (6 уйăха) – почтăра:**
**«Тантăш» – 148 тенкĕ те 98 пус**
**«Тетте» – 95 тенкĕ те 52 пус**
**«Самант» – 121 тенкĕ те 2 пус**
**«Чăваш пичечĕн» киоскĕсенче:**
**«Тантăш» – 102 тенкĕ**
**«Тетте» – 90 тенкĕ**
**«Самант» – 111 тенкĕ**

**Альтернативлă çырăнтару (редакцире илсе тăма е шкулах пырса леçетпĕр)**
**6 уйăха:**
**«Тантăш» – 80 тенкĕ**
**«Тетте» – 80 тенкĕ**
**«Самант» – 100 тенкĕ**
**9 уйăха:**
**«Тантăш» – 120 тенкĕ**
**«Тетте-Игрушка» – 120 тенкĕ**
**«Самант» – 150 тенкĕ**


**Продается телка черная, д. Сюрлатри.**
**Тел.: 8-927-843-14-20.**

**Срочно требуются швеи. Оплата 6000 руб.+бесплатный проезд. Тел.: 62-5-44. 1-4.**


**Результаты открытого аукциона**
**на право заключения договора купли-продажи**
**от 27 октября 2009 г.**

**27 октября 2009 года состоялся открытый аукцион право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2009 году, с одновременной приватизацией земельного участка, на котором оно расположено. Победителем аукциона по лоту № 1 признана Терентьева Инга Петровна. Установленная на аукционе цена лота – 1026030 руб.**


**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 38-40.**


**www.yandex.ru Прогноз погоды с 7 ноября по 13 ноября**

| сб 7 | вс 8 | пн 9 | вт 10 | ср 11 | чт 12 | пт 13 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно, небольшой снег | переменная облачность | переменная облачность | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой дождь | облачно | облачно |
| -1 | -1 | 0 | 0 | +1 | +3 | +2 |
| -5 | -4 | -5 | -2 | -1 | -2 | -2 |


**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-8.**

**Продаю песок, гравмассу с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-902-327-66-95. 5-5.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР, РАДУГА с установкой, регистрацией и обслуживанием. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-5.**

**Требуется менеджер по реализации пластиковых окон, знание ПК. Оплата сдельная. Тел.: 8-960-310-18-16.**

**Продаю: листы оцинкованные, профнастил (крашеные и некрашеные). Пиломатериал (хвоя, береза).**
**Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.**

**Ĕне, тына, вăкăр, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-5.**

**На территории рынка в с. Большой Сундырь работает шерсточесальный цех. Перед обработкой шерсть просушить. Работаем без выходных, с 7-00 часов утра.**
**Тел.: 8-903-063-11-63. Алексей.**




Окна Star ЗАМЕР УСТАНОВКА ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО!

**8 960 310 18 16**




**Предприниматель Еропанов Н.В. продает компьютеры по оптовым ценам. Предоставляет льготный кредит по Президентской программе «Компьютер - в каждый дом». Устанавливает спутниковые антенны «Триколор». Тел.: 62930, 89196515333, 89176519222 рядом с санэпидстанцией. 2-3.**

**ЯдринИнвестСтрой**

**- Проектирование**
**- Строительство**
**- Технадзор**
**e-mail: sangex@bk.ru**
**Тел.: 8-927-845-49-64**
**8-927-849-72-30**












Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru.

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 06.11.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3790.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.